25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 11 ЮНКУН 263 (6198) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн Политсекторӗ тӑратнӑ тӑрӑх, пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата трактор паркӗпе лайӑх усӑ курнӑшӑн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

192. **Канаш МТС-ӗ** (директорӗ **Тимофеев** юлташ, политотдел начальникӗ **Кукушкин** юлташ, старши механикӗ **Толкачев** юлташ). Вӑл трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне авӑн ҫапассисӗр пуҫне, 101,7 процент тултарнӑ, комбайнпа вырса пуҫтармалли плана 115,9 процент тултарнӑ, 4 тонна ытла горючи перекетлесе хӑварнӑ.

193. **Вӑрмар МТС-ӗ** (политотдел начальникӗ **Бойков** юлташ, старши агрономӗ **Петров** юлташ, старши механикӗ **Верхунов** юлташ). Вӑл трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне, авӑн ҫапассисӗр пуҫне, 101,7 процент тултарнӑ, комбайнпа вырса пуҫтармалли плана 151,3 процент тултарнӑ.

194. **Комсомольски МТС** (директорӗ **Ширкадинов** юлташ, политотдел начальникӗ **Долгов** юлташ, старши агрономӗ **Перлов** юлташ, старши механикӗ **Кудрявцев** юлташ). Вӑл трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне, авӑн ҫапассисӗр пуҫне 100,7 процент тултарнӑ, комбайнпа вырса пуҫтармалли плана 183,1 процент, авӑн ҫапмалли плана 114,6 процент тултарнӑ, тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем туса хатӗрлемелли тата юсаса ҫӗнетмелли плана 152 процент тултарнӑ.

Ҫулпуҫ доклачӗ ҫине ответлесе, авӑн ҫапас ӗҫе вӑйлатар

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртура республикӑри колхозсем пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ. Кӗрхи ҫӗртме сухине кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен 27 пин гектар ытларах туса хӑварнӑ, малта пыракан колхозсем аслӑ уява ялхуҫалӑхӗнчи пӗтӗм ӗҫсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленипе чысласа иртерчӗҫ.

Ноябрӗн 5-мӗшӗ тӗлне Чӑваш республикинчи колхозсем 1942 ҫулта туса илнӗ тырпулсен 75,1 процентне ҫапса государствӑн тата колхозсен амбарӗсене кӗртсе хунӑ. Ӑнӑҫлӑ пулнӑ тырпула: тӗштырӑсемпе вӑрлӑхлӑх акса ӳстернӗ куракӑсене, ҫавӑн пекех техникӑллӑ культурӑсене те пӗр пӗрчӗ юлми ҫапса илес ӗҫ, государствӑна тырӑ парса татас ӗҫ—колхозсемпе машинно-тракторнӑй станцисем умӗнче тӑракан паянхи задача. Ҫак ӗҫсене хӑвӑрт тата ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама пирӗн колхозсем халь пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлемелле, партипе совет тата комсомол организацисен районри активӗ ҫак ӗҫсене колхозсенче большевикла йӗркелесе пымалла.

ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ноябрӗн 10-мӗшпе 30-мӗшӗ хушшинче авӑн ҫапса пӗтерессишӗн тата государствӑна тырӑ парса татассишӗн фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑх ирттерме постановлени йышӑнчӗҫ. Ҫак ҫирӗм кун хушшинче республикӑри колхозсем тырпулсене пӗтӗмӗшпех пуҫтарса кӗмелле, государствӑна тырӑ парса татмалла. Ку ӗҫсене пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫлама пирӗн кӑҫал пур условисем те пур. Колхозсенче молотилкӑсем, ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ пӗтӗмпех авӑн ҫапас ӗҫе тӑма пултарать, машинно-тракторнӑй станцисем колхозсене ӗҫре пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ. Колхозниксен ӗҫлес хастарлӑхӗ Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура татах ӳсрӗ. Уяв умӗн тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетмелле, ӗҫре социализмлӑ ӑмӑртӑва татах вӑйлатмалла.

Новосибирск облаҫӗнчи «Путь крестьянина», Алма-Ата облаҫӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозсен чӗнӗвӗ тӑрӑх, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва пирӗн республикӑри колхозсем активлӑн хутшӑнчӗҫ. Республикӑри нумай колхозсем Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене ялхуҫалӑхӗнчи пур ӗҫсенче те чыслӑн пурнӑҫласа пычӗҫ. Халӗ колхозсенче социализмлӑ ӑмӑрту татах вӑйлӑн ҫӗкленмелле, илнӗ обязательствӑсене вӗҫне ҫити чыслӑн пурнӑҫласа пымалла, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура хамӑрӑн Чӑваш республикине малти рете кӑларассишӗн вӗҫне ҫити хӗрӳллӗн кӗрешмелле.

Авӑн ҫапса пӗтерес тата государствӑна тырӑ парса татас ӗҫсем халь ҫак тӗп тӗллевпе пулса пымалла та. Фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑх хушшинче кашни колхоз хӑйӗн ӑмӑртури обязательствисене чыслӑн пурнӑҫласа ҫитермелле, тырпулсене пӗр пӗрчӗ юлми ҫапса кӗртмелле, государствӑна тырӑ парса татмалла.

Ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ ӑна кирлӗ пек лайӑх организацилесе пынинчен килет. Фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхра авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ турттарас ӗҫсене уйрӑмах лайӑх организацилесе пымалла. Пилӗккунлӑх заданисене кашни колхоза, МТС бригадисене ҫитерсе ӑнлантарса памалла, ӗҫ планне пурнӑҫа кӗртсе пыма пӗтӗм массӑна мобилизацилемелле. ВКП(б) райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен, МТС директорӗсемпе политотдел начальникӗсен авӑн ҫапнӑ ҫӗрте молотилкӑсемпе, комбайнсемпе пуринпе те туллин усӑ курмалла тӑвас пулать, кашни молотилкӑпа талӑкра ҫапмалли нормӑсем кӑтартса памалла, вӑл нормӑсене куллен пурнӑҫласа пыма мерӑсем йышӑнмалла, ҫак вӑхӑтрах авӑна тӑпачӑпа ҫапас ӗҫе те анлӑн туса пымалла.

Государствӑна тырӑ леҫсе пама колхозсенче яланах ҫак ӗҫе тӑвакан транспорт бригадисем тумалла, бригадӑсем хатӗрлев пункчӗсене тырӑ турттармалли талӑкри заданисене куллен пурнӑҫласа пымалла, ҫакна тума транспорт бригадисене ҫителӗклӗ таран туртӑм вӑйӗ уйӑрса памалла тата колхозниксем ҫирӗплетмелле.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗпе ЧАССР Совнаркомӗ хӑйсен постановленийӗнче вӑрлӑхлӑх акса ӳстернӗ куракӑсене ҫапса илес ӗҫе кая хӑварса пынине сивлерӗҫ. Вӑрлӑхлӑх куракӑсен вӑрлӑхне ҫапса илес ӗҫе кая хӑварма юрамасть. Тӗштырӑсемпе пӗрлех вӑрлӑхлӑх куракӑсене те ҫак ҫирӗм кун хушшинче пӗтӗмӗшпех ҫапса илмелле. Куракӑ вӑррисене ҫапма лаша вӑйӗпе ӗҫлекен молотилкӑсем умне приспособленисем майлаштарса лартмалла, ҫавӑнпа пӗрлех куракӑсен вӑрлӑхне алӑпа шӗкӗлчес ӗҫе те анлӑн организацилемелле.

Авӑн ҫапса пӗтерессишӗн тата государствӑна тырӑ парса татассишӗн пыракан фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхра колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче агитациллӗ-ӑнлантаруллӑ ӗҫе вӑйлӑн туса пыни кирлӗ. Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ Сталин юлташ 1942 ҫулти ноябрӗн 6-мӗшӗнче Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ доклада тата ноябрӗн 7-мӗшӗнче панӑ приказа колхозниксемпе колхозницӑсене тӗплӗн ӑнлантарса парас пулать, Сталин юлташ кӑларса тӑратнӑ задачӑсене тӳррӗн пурнӑҫласа пыма колхозниксен пӗтӗм массине ӗҫе ҫӗклемелле.

Колхоз производствинчи стахановецсен паха опытне масса хушшине анлӑн сарса пымалла. Комсомольски МТС-ӗнчи машинист Васильев юлташ «МК-1100» маркӑллӑ молотилкӑпа «Красный воин» колхозра куллен 20 гектар ҫинчи тырра ҫапса пырать. Колхоз руководителӗсем авӑн ҫапас ӗҫе икӗ сменӑпа организацилесе молотилкӑна талӑкӗпех ӗҫлеттереҫҫӗ. Васильев юлташ ӗҫлекен молотилка кӑҫал пурӗ 550 тонна тырӑ ҫапса кӑларнӑ, молотилка халӗ те пӗр чарӑнусӑр ӗҫлет. Кашни колхозӑн авӑн ҫапас ӗҫе ҫакӑн пек организацилемелле. Кашни молотилкӑна вӑл мӗн таран ӗҫлеме пултарать, ҫавӑн чухлӗ туллин ӗҫлеттерни кирлӗ.

Элӗк районӗ фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑха чылай колхозсенче авӑн ҫапса пӗтернипе кӗчӗ. Анчах та районри хӑшпӗр колхозсем авӑн ҫапас ӗҫе япӑх йӗркеленӗ-ха. «Зерно» колхозра руководительсен тимсӗрлӗхне пула молотилка ӗҫлемесӗр ларать. Молотилка патӗнче куллен 40—50 ҫын ӗҫлемелле пулсан, кунта ӗҫе 29 ҫынна ҫеҫ кӑларнӑ. Ӗҫ вӑйӗ ҫитменнипе молотилка ӗҫсӗр нумай тӑрать. Ку ҫеҫ те мар, районри «Канаш» колхоз тырра алӑпа ҫапать. Кӗлте ҫыххисене салтмасӑр ҫапнине пула кунта кашни вунӑ кӗлте пуҫне вӑтам шутпа 300-шер грамм тырӑ юлать. Ӗҫе тӗрӗс мар организацилениие пула, авӑн ҫапас ӗҫ ҫине колхоз руководителӗсем ҫавӑрӑнса пӑхманнине пула кунта кашни гектартан вӑтам шутпа пӗр центнер та 15 килограмм тырӑ улӑм ӑшне юлать. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле. Авӑна пысӑк пахалӑхпа ҫапас пулать, кашни килограмм тырра пуҫтарса илме тӑрӑшмалла.

Сталин юлташ кӑтартса панӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртме, нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах пӗтерсе тӑкса ҫӗнтерӳ тума ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене тата лайӑхрах туса пырар, ӗҫӗн тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ҫӗклесе ноябрӗн 30-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерер, государствӑна тырӑ парса татар.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ноябрӗн 9-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 9-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

Хура тинӗсре пирӗн карапсем противникӑн 3 пин тонна водоизмещениллӗ транспортне путарнӑ.

* * *

Ноябрӗн 8-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 5 танкне тата 30 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул тӑрӑх пыракан пӗр эшелона ҫӗмӗрнӗ, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити тата утлӑ ҫарӑн пӗр эскадронне сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн пӗчӗк ушкӑнӗсен атакисене сирсе тӑнӑ тата хӑйсен позицийӗсене ҫирӗплетнӗ. Хулан заводсем пайӗнче Н-ски соединенин участокӗнче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна ҫити вӗлернӗ. Артиллеристсемпе минометчиксем тӑшманӑн 2 блиндажне ҫӗмӗрнӗ, 2 оруди пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен пехотине пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ. Ытти участоксенче кун каҫиччен пирӗн боецсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна ҫити вӗлернӗ, 2 танк, 4 оруди, 10 пулемет, 9 миномет тата 40 автомашина таран пӗтерсе тӑкнӑ.

Совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем ҫаплах активлӑн ҫапӑҫнӑ, противника пысӑк ҫухатусем кӳнӗ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем нимӗҫсен 6 танкне пӗтерсе тӑкнӑ тата 400 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем нимӗҫсен 8 танкне персе ҫӗмӗрнӗ. Вӑл шутран 3 танка наводчик Цичхинашвили юлташ пӗтерсе тӑкнӑ.

Пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче противникӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ тата 3 самолетне сиенленӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсен пехотин икӗ батальонӗ пирӗн пӗр юханшыв районӗнче тӗркелетнӗ пунктсене виҫӗ хутчен атакӑланӑ. Гитлеровецсен атакисене сирсе янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 150 виллине ҫити выртса юлнӑ.

* * *

Моздок районӗнче противник пирӗн позицисене атакӑлама хӑтланнӑ. Ҫапӑҫура тӑшманӑн 160 салтакӗпе офицерне вӗлернӗ, нимӗҫсен малтанхи рубеж ҫине чакмалла пулнӑ. Ҫав участокрах нимӗҫсен пӗр чаҫӗн командӑй пунктне аркатса тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Воронеж районӗнчи Н-ски часть артиллерийӗн персе 23 ДЗОТ-па блиндажа ишӗлтерсе антарнӑ, 2 миномет батарейине, 22 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ, противник артиллерийӗн тата минометчӗсен 7 батарейине пусарнӑ. Пӗр соединенин снайперӗсем нимӗҫсен 128 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Витебск облаҫӗн районӗсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ октябрӗн вӗҫӗнче противникӑн карательнӑй отрячӗпе хаяр ҫапӑҫусем туса пынӑ. Нимӗҫсем партизансене хирӗҫ пехотӑн пысӑк вӑйӗсене, танксемпе броневиксене вӑрҫа кӗртсе янӑ, партизансем гитлеровецсен планне пӑсса тӑкнӑ, тӑшмана кӗтмен ҫӗртен пыра-пыра ҫапса, совет патриочӗсем нимӗҫсен-фашистла захватчикӗсене 400 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Тытса илнӗ документсем хушшинче нимӗҫсен пӗрремӗш танковӑй армийӗ ҫумӗнчи полевой полици секретарӗн Фридрих Шмидт арӑмӗн темиҫе ҫырӳне тупнӑ. Ҫак нимӗҫ йӗрӗнчӗкӗ Реклингхаузенран хӑйӗн упӑшки патне ҫапла ҫырать: «159, 160 тата 161-мӗш номерлӗ посылкӑсене илтӗмӗр. Тӗрлӗ япаласем, ҫавӑн пекех ҫимелли япаласем, уйрӑмӑнах аш-какай тата ҫу кунта питӗ хаклӑ. Хӗрачасем ботинка илнӗшӗн питӗ савӑнаҫҫӗ. Халь эсир наступлени тӑватӑр, эсӗ ҫӑнӑх тата ҫу ярса пар». Гитлерла бандит Шмидт советӑн мирлӗ граждӑнӗсене ҫӗршерӗн асаплантарнӑ тата ҫаратнӑ. Хӑйӗн черетлӗ жертвине вӗлерсе ҫаратнӑ хыҫҫӑн, ҫак вӗлернӗ хӗрарӑмсемпе ачасен тумтирӗсене тултарнӑ посылкӑна яма почтӑна васканӑ. Вӑл нимрен те йӗрӗнмен, кашни посылкине номер панӑ. Хӑйӗн ирсӗр ӗҫӗсемшӗн ҫак фашистла мерзавец совет пульлине туяннӑ. Нимӗҫсен ытти вӑрӑхурахӗсен те ҫак мерзавецӑнни пекех шӑпи тулӗ.

* * *

Норвегири паллӑ патриотӑн Ларсенӑн партизанла отрячӗн ӗҫӗсем ҫинчен хыпар илнӗ. Октябрь уйӑхӗнче ҫак отряд 150 гитлерла салтака вӗлерсе пӗтернӗ тата нимӗҫсен грузовикне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Финляндипе Норвеги чиккинче ҫӗрле Ларсен партизанӗсем сасартӑк нимӗҫсем ҫине тапӑннӑ. Партизансем казарма ӑшне гранатӑсем ыватнӑ. Чӗрӗ юлнӑ гитлеровецсем тарса ҫӑлӑнма пикеннӗ, анчах вӗсене те пӑшалсемпе пулеметсенчен персе вӗлернӗ.

Ноябрӗн 10-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн чаҫсем хӑйсен позицийӗсене ҫирӗплетсе тӑнӑ тата противникӑн вак групписем тунӑ атакӑсене сирсе-сирсе янӑ. Нимӗҫ пехотин роти пӗр завод патӗнчи участокра разведка тума хӑтланни ӑнӑҫман. Пирӗн боецсем пӑшалпа тата пулеметпа персе гитлеровецсене сапаласа янӑ. Хула оборонин мӗнпур участокӗсенче противникӑн 100 салтакӗпе офицерне ҫити, 2 орудине, 11 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ тата 8 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн подразделени ҫӗрле нимӗҫсен тылне кӗрсе кайнӑ. Часовойсене пӗр сас-чӗвӗсӗр вӗлерсе, совет боецӗсем нимӗҫсен блиндажӗсене кӗрсе кайнӑ та 36 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра гвардеец-минометчиксем, противникӑн пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ войскисем ҫине персе 8 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен пехотине пӗр рота таран вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем активлӑн ҫапӑҫнӑ. Пӗр участокра противник хӑйӗн пехотипе танкӗсен вӑйӗсемпе пирӗн позицисене темиҫе хут та атакӑланӑ. Нимӗҫсен атакисене сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Пирӗн артиллери 2 танка персе ҫӗмӗрнӗ тата противникӑн 2 орудине, 7 пулеметне, 3 минометне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре противник, пысӑк ҫухатусем тӳссе, пӗр юханшыв урлӑ каҫнӑ. Пирӗн чаҫсем контратака тунӑ та нимӗҫсене шывӑн тепӗр хӗррине хӑваласа янӑ, ҫавӑн чухне 200 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра нимӗҫсен разведка тӑвакан отрячӗ совет чаҫӗсем тӑракан вырӑна кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Пирӗн боецсем пӑшалпа, пулеметпа тата минометпа персе, 50 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Ыттисем вара васкасах каялла ҫавӑрӑнса кайнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн артиллерипе снайперсем нимӗҫсенне 400 салтакпа офицера ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ тата 29 дзотпа блиндажа ҫӗмӗрнӗ. Пӗр участокра Н-ски чаҫри разведчиксен ушкӑнӗ противникӑн траншейисене кӗрсе кайнӑ. Кӗске вӑхӑт хушши пынӑ тытӑҫура вӗсем нимӗҫсен 30 салтакне тата 2 офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Хӗҫпӑшалсемпе документсене илсе, пирӗн боецсем пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне таварӑннӑ.

* * *

Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен тӑватӑ отрячӗ пӗрлешсе темиҫе боевой операци туса ирттернӗ. Партизансем чугунҫул станцине тата разъезда аркатса тӑкнӑ. Чугунҫул хуҫалӑхне пӑсса пӗтернӗ, служба ҫуртӗсене ҫунтарса янӑ, тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ хунӑ икӗ склада тата горючи складне сирпӗнтерсе янӑ.

Орел облаҫӗнчи партизансен пӗр ушкӑнӗ противникӑн ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Нимӗҫсен 285-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ ефрейтор Георг К. ҫапла каласа панӑ: «Никольское ялӗнче нимӗҫ коменданчӗ хушнӑ тӑрӑх шкул патӗнче виселица туса лартнӑ. Эпӗ ялта пурӑннӑ вӑхӑтра ҫавӑнта икӗ хӗрарӑма тата пӗр арҫынна ҫакса вӗлерчӗҫ. Комендант ялти мӗнпур ҫынсене ҫав асаплантарса вӗлермелли вырӑна пухрӗ те ҫапла каларӗ: «Эпир паян виҫӗ вырӑса вӗсем хӑйсен пахчинчен кӑларнӑ темиҫе михӗ ҫӗрулмине пытарса хунӑшӑн, ӑна нимӗҫ ҫарне паманшӑн ҫакса вӗлеретпӗр. Ҫавӑн пек ӗҫсем татах та пулсан, эпир темиҫе виселица туса лартӑпӑр», терӗ. Ҫӗрле хресченсем комендатура ҫуртне вут тӗртсе ҫунтарнӑ, нимӗҫ комендантне вӗлернӗ. Ҫав ялти нумай ҫынсем хӑйсен ҫемьисемпе пӗрле вӑрмана тарнӑ».

Ҫулпуҫӑн доклачӗпе приказӗ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ

Ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ

ҪӖМӖРЛЕ, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Ӗнер комбинатри рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен митингӗ пулса иртрӗ. Митингра Сталин юлташӑн докладне вуласа тата ӑнлантарса пачӗҫ. Доклад пирки рабочисем туха-туха каларӗҫ. Стахановец Дмитриев юлташ ҫапла каларӗ:

— Сталин юлташӑн сӑмахӗ — пирӗн ӗҫӗн программи. Эпир, унӑн доклачӗ ҫине ответлесе, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, продукци пахалӑхне лайӑхлатма тата фронта пулӑшассине вӑйлатма пулатпӑр,—терӗ вӑл.

Митингра пулнисем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Дмитриев ӗҫлекен цех коллективӗ, сӑмахран, ноябрьте октябрьтинчен 15 процент ытларах продукци пама пулчӗ.

Трибуна ҫинче — стахановец Афонин юлташ.

— Ҫулпуҫ доклачӗ пире татах та тимлӗнрех ӗҫлеме хавхалантарать. Фронта вӑйлӑнрах пулӑшас тесе, эпӗ ӗҫ нормине кулленех 300 процент тултарма обязательство илетӗп,— тет Афонин юлташ.

Сталин юлташ хӑйӗн докладӗнче лартнӑ задачӑсене пурнӑҫлас тӗллевпе комбинат коллективӗ ноябрь уйӑхӗнчи программӑна пур цехсем тӑрӑх та ирттерсе тултарма, уйрӑм цехсем юлса пынине пӗтерме, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме обязательство илчӗ.

Х. ЛИСИН

Агитаторсем ӗҫе тытӑнаҫҫӗ

СӖНТӖР, ноябрӗн 10-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ кӑҫалхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ доклада ӗҫҫыннисене ӑнлантарса парас шутпа ӗнер ВКП(б) райкомӗ пуҫламӗш парторганизаци секретарӗсен, агитколлектив руководителӗсен тата парти активӗн районри канашлӑвне ирттерчӗ. Ҫак ытупах ыран комсомол активӗн районри пухӑвӗ пулса иртет. Доклада ӑнлантарас тӗлӗшпе ҫамрӑксен мӗн тумалли ҫинчен унта ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Гусев юлташ каласа парать. Ҫавӑн пекех ялсовет, колхоз председателӗсен, ялти активӑн подрайонсенчи канашлӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Вӑл канашлусене ВКП(б) райком бюровӗн членӗсем ирттереҫҫӗ.

С. ИВАНОВ,
ВКП(б) Сӗнтӗр райкомӗн пропаганда отделӗн заведующийӗ

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ, Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский юлташ патӗнче пулнӑ йышӑну

Кӑҫалхи ноябрӗн 7-мӗшӗнче Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарнӑ ятпа ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ, Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский юлташ Куйбышев хулинче дипломатиллӗ корпус валли йышӑну туса ирттернӗ.

Йышӑнура дипломатиллӗ корпус, ютҫӗршыв корреспонденчӗсем, ҫавӑн пекех тата Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн, Оборона Халӑх Комиссариачӗн, Тинӗс-Ҫар Флочӗн Халӑх Комиссариачӗн, Тулашри Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗн ответлӑ сотрудникӗсем, вырӑнти влаҫсемпе общественноҫӑн представителӗсем пулнӑ.

ТАНКСЕН КОЛОННИСЕНЕ ТУМА

КАЛИНИНО. Ассакассинчи «КИМ» колхоз членӗсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 1.500 тенкӗ укҫа пухса пачӗҫ. Вӑл шутра Е. Аникин 200 тенкӗ, К. Егоров 150 тенкӗ, Леонтьев 120 тенкӗ, Алиферов 100 тенкӗ пачӗҫ.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту

Н-ски завод уява мӗнпе паллӑ турӗ

Челноков юлташ главнӑй инженер пулса тӑракан Н-ски завод хӑйӗн производство программине уйӑхран уйӑха ӑнӑҫлӑн тултарать. Октябрь уйӑхӗнчи производство программине вӑл срокчен тата ытлашшипех тултарчӗ. Ҫавӑншӑн завод коллективӗ Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗпе пӗр Халӑх Комиссариачӗн виҫҫӗмӗш премине илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура заводри цехсенчен Плешанов юлташ ертсе пыракан цех уйрӑмах лайӑх ӗҫлерӗ. Вӑл цех коллективӗ пур номенклатурӑсем тӑрӑх та заданисене ирттерсе тултарчӗ, унпа пӗрлех лайӑх пахалӑхлӑ продукци пачӗ.

Ҫавӑн пекех Бубис юлташ ертсе пыракан мастерскойри рабочисемпе работницӑсем, Вольтман юлташ цехӗнчи инженерсемпе техниксем те уяв умӗнхи уйӑхра хастарлӑн ӗҫлерӗҫ. Вольтман цехӗнчи инженерла-техникла работниксем, производствӑна пултаруллӑ организацилесе, ытти цехсене кирлӗ полуфабрикатсене вӑхӑтра тата лайӑх пахалӑхпа парса тӑчӗҫ.

Юлашки вӑхӑтра заводри рабочисемпе работницӑсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ палӑрмаллах ӳсрӗ. Опытлӑ стахановецсем уйрӑмах пысӑк тухӑҫлӑх кӑтартаҫҫӗ. Стахановкӑсем Афанасьева, Морозова, Ульянова, Моторина, Патюшина, Мараева, Лошманова, Вавилова тата ыттисем те хӑйсен нормисене тӑтӑшах 2—3 хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗн премийӗпе хавхаланнӑ завод коллективӗ ҫитес уйӑхсенче татах та лайӑхрах ӗҫлеме, фронтпа ҫӗршыв ыйтнӑ продукцие вӑхӑтра тата лайӑх пахалӑхпа туса кӑларма пулать.

Рабочисен мухтавлӑ ӗҫӗсем

КУСЛАВККА. (**Телефонпа**). Комбинат коллективӗ Октябрь уявне ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳ тунипе—иртнӗ уйӑхри плана ӑнӑҫлӑн тултарнипе паллӑ турӗ. Пушкин юлташӑн цехӗ, сӑмахран, октябрьти плана срокран 10 кун малтан тултарчӗ. Ҫавӑн пекех Дружинник, Симонов тата Калашников юлташсен цехӗсем те уйӑхри ӗҫсене вӗҫлерӗҫ.

Комбинатри стахановецсем ӗҫре паттӑрлӑхпа чӑтӑмлӑх кӑтартаҫҫӗ. Токарь Клемашевский юлташ, станокран 66 сехет хушши уйӑрӑлмасӑр ӗҫлесе, хӑйне панӑ васкавлӑ задание срокчен пурнӑҫларӗ. Ҫавӑн пекех Колесниковпа Казаков слесарьсем, Вареспа Микельсонс сборщиксем виҫшер смена хушши цехран тухмасӑр ӗҫлерӗҫ. Столярсем Береговой, Петров тата Харинский юлташсем октябрьти нормӑна 3-шер хут ирттерсе тултараҫҫӗ.

Комбинатри цехсенчен яланхи пекех Пушкин юлташӑн цехӗ малта пырать. Паянхи куна вӑл ноябрьти плана 50 процент таран тултарнӑ та ӗнтӗ. Уяв ячӗпе пулса иртнӗ чаплӑ ларура Пушкин юлташӑн цехне комбинатӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне пачӗҫ.

Н. ПЕТРУЧЕНКО.
Комбинатри партбюро секретарӗ.

Вӑрман ӗҫӗнчи стахановецсем

Леспромхоз коллективӗ чугунҫул транспорчӗ валли кӑҫал вутӑ хатӗрлемелли задание тултарчӗ. Халӗ коллектив вутта заданирен ирттерсе хатӗрлет. Ҫитес кунсенчех коллектив турттарас енӗпе панӑ задание те тултарать.

Вӑрманта ӗҫлекен стахановецсемпе стахановкӑсем социализмлӑ ӑмӑртура пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартрӗҫ. Норма тӑрӑх кашни рабочин кунне 2,5 кубометр вутӑ хатӗрлемелле. Паллӑ стахановец Григорий Егоров кашни кун вӑтамран 10 кубометр хатӗрлесе ҫав нормӑна 4 хут ирттерсе тултарать. Хӑшпӗр кунсенче вӑл унтан тухӑҫлӑрах ӗҫлет. Ноябрӗн 1-мӗшӗнче, сӑмахран, 15 кубометр хатӗрлерӗ. Ҫавӑн пекех Унтрецов, Прокопьев тата Михайлов юлташсем те 10—12 кубометр таран хатӗрлеҫҫӗ.

Ҫак хӗрӳ кунсенче вӑрманта ӗҫлекен Акулина Иванова, Кузнецова работницӑсем хӑйсен нормисене кашни кун 2 хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозран пынӑ Салмина юлташ та нормӑран 1,5 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлет.

Социализмлӑ ӑмӑртура стахановецсемпе стахановкӑсен йышӗ ӳснӗҫемӗн ӳсе пырать.

В. КУПЦОВ,
Вӑрнар леспромхоз директорӗ.

Авăн çапса пĕтермелли çирĕмкунлăх

Молотилкăсем пурте ĕçре

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Авăн çапса пĕтерессишĕн тата государствăна тырă парса татассишĕн фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăха организацилесе ирттерме ВКП(б) Елчĕк райкомĕпе райсовет исполкомĕ партипе совет тата комсомол организацийĕсен районри активне колхозсене ячĕç, çирĕмкунлăхра тумалли заданисене кашни колхоза тата МТС бригадисене кăтартса пачĕç. Паян авăн çапнă çĕрте МТС-ăн тракторсемпе ĕçлекен 18 молотилка, 4 комбайн, колхозсен лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкисем те пурте ĕçлеççĕ. Ноябрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче районри колхозсем пурĕ 1200 гектар çинчи тырпула çапнă, çак хушăра 8 колхоз авăн çапса пĕтернĕ, 9 колхоз государствăна тырă парса татнă.

В. МАРКОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Авăн çапнă çĕрти тăкаксемпе кĕрешмелле

ЭЛЕК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районри 36 колхоз авăн çапса пĕтернĕ. Ноябрĕн малтанхи пилĕк кунĕ хушшинче районри колхозсем пурĕ 986 гектар çинчи тырпула çапнă. Анчах та авăн çапнă çĕрте хăшпĕр колхозсем тырра нумай тăккалаççĕ, ĕçе кирлĕ пек организацилемеççĕ.

«Зерно» колхозра (председателĕ Кудрявцева юлташ) ĕç дисциплинине япăхтарнă. Авăн çапнă çĕрте ĕçлеме тивĕçлĕ колхозниксем ĕçе тухмаççĕ, çакна пула трактор молотилки час-часах чарăнса тăрать. Вăрманкассинчи «Труд» колхозăн авăна молотилкăпа çапма пур майсем те пур, анчах кунта тырра алăпа çеç çапаççĕ. Колхозăн кăçал 436 гектар тыррине çапмалла, паянхи куна 172 гектар çеç çапнă. Тырра алăпа çапас ĕçе те япăх организациленĕ, колхозниксем талăкра 5—6 сехет хушши çеç ĕçлеççĕ.

«Канаш», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапнă çĕрте тырра нумай тăккалаççĕ. Кунта ĕçе тĕрĕс мар организациленĕ, ыраша кĕлтен хăварса çапаççĕ. Кĕлте çыххисенче ыраш нумай юлать. Çак çитменлĕхсене халех пĕтермелле, фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхне ÿстермелле, авăна пĕр тăккаламасăр çапса пуçтармалла.

И. ИВАНОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Трактор молотилки куллен 20 гектар тыррике çапать

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пурĕ 12.238 гектар çинчи тырпула çапса пуçтарчĕç. Çак иртнĕ 2—3 кунра авăн çапас ĕç нумай хут лайăхланса пыни курăнать. Авăн çапас ĕçе ытти ĕçсенчен пушаннă пур колхозниксене те явăçтарнă. Çавăн пекех туртăм вăйне те пĕтĕмĕшпех авăн çапас тата тырă турттарас ĕçсене кÿлнĕ. Нумай колхозсенче тырра молотилкăсемпе те, алăпа та çапаççĕ.

«Красный воин» колхозра трактор вăйĕпе ĕçлекен «МК 1100» маркăллă молотилка талăкĕпех ĕçлет. Колхозниксем икĕ сменăпа ĕçленĕ май кунта молотилка куллен 20 гектар тыррине çапса пуçтарать. Машинист Васильев юлташ куллен ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн ĕçлет. Унăн молотилки кăçал 550 тонна тырă çапнă.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Парти организацийĕн отчетпа суйлав пухăвĕ

Çак кунсенче ВКП(б) Тăвай районĕнчи парти организацийĕн отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) райкомĕн ĕçĕсем çинчен А. Салмин юлташăн докладне сÿтсе-яврĕ. Доклад тăрăх пурĕ 18 çын тухса каларĕ. Докладчик, çавăн пекех тухса калаçакансем те ВКП(б) райкомĕ отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетнине палăртрĕç. Сталин юлташăн кăтартăвĕсене пурнăçласа пырса, район, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ĕлкĕртсе пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та, чăх-чĕпсемсĕр тата лашасемсĕр пуçне, ирттерсе тултарнă. Фронта пулăшас енĕпе оборона фондне 124.907 тенкĕ укçа хывнă, бронепоезд тума 11.900 тенкĕ панă, вуншар пин тенкĕ танксен колоннисене тума хывнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парасси те ÿссех пырать.

Çак вăхăтрах туса çитермен ĕçсем те пур-ха. Район уйрăмах авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе юлса пырать. Тырă леçессине ку таринччен те 70 процент, ашкакай хатĕрлевĕн планне 62 процент, сĕт-çу тăратассине 84 процент, çăмарта парассине 60 процент, çăм парассине 95 процент çеç тултарнă. Çакă вăл партиллĕ-политикăллă ĕçе кирлĕ пек туса пыманнинчен килнĕ.

Отчетлă тапхăрта 150 çынна ответлă ĕçсене куçарнă пулсан та, кадрсен отделĕ çĕнĕ çынсене куллен вĕрентсе, çитĕнтерсе пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ.

Пуху çавăн пекех тата малта пыракан юлташсене парти ретне илес ĕç çителĕксĕр пулса пынине, парти райкомĕ пуçламĕш парторганизацисене кирлĕ пек ертсе пыманнине палăртса хăварчĕ. Отчетлă тапхăрта ВКП(б) членне 27 çынна, ВКП(б) кандидатне 23 çынна кăна илнĕ.

Пухура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ С. П. Никитин юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл парти организацийĕн ку таринччехи ĕçне тишкĕрсе, малашнехи задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Пуху ВКП(б) райкомĕн составне 15 çынран суйларĕ. ВКП(б) райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулма А. Н. Салмин юлташа суйласа хăварнă.

В. ЧЕРНОВ.

РАБОЧИСЕНЕ ПАХЧА-ÇИМĔÇСЕМ СУТАР

КАЛИНИНО. Шупашкар районĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем чĕнсе каланине Калинино районĕнчи колхозсем ырласа йышăнаççĕ. Чылай колхозсенче промышленность предприятийĕсенчи рабочисене сутмашкăн пахча-çимĕçпе çĕрулми пухас ĕç анлăн сарăлчĕ.

Ямбахтинăри «Партизан» колхоз членĕсем рабочисене государство хакĕпе сутма 250 килограмм купăста, 234 килограмм çĕрулми, 18 килограмм сухан пухса пачĕç.

Г. МАТВЕЕВ.

ХĔЛЕ ХАТĔР МАР

КУКЕÇ. Карачурари Тельман ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Иванов юлташ) выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма пачах хатĕрленмест. Пăрусемпе сурăхсене усрама витесем çук, пур витесене те юсама тытăнман, вĕсенчен хăш-пĕрине пахча-çимĕç тултарса лартнă.

Сыснасене çĕрулмипе тăрантараççĕ. Çĕрулмине чĕрĕллех, çуса тасатмасăрах пăрахса параççĕ. Колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕшĕн тăрăшса ĕçлени пачах сисĕнмест. Выльăх-чĕрлĕхĕн апат-çимĕç базине çителĕклĕ таран туман, ăна виçесĕр тăккаласа тыткалаççĕ. Çакăн пек йĕркесĕрлĕх выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ÿстерсе пырас ĕçре пысăк сиен тăвать. Колхозăн фермисенче халех йĕркелĕх тумалла, выльăхсене хĕлкаçарма тивĕçлипе хатĕрленес пулать.

К. АНАНЬЕВА.

Эмел курăкĕсем нумай пухнă

ÇЕМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Анат Кăмашари вăтам шкулта вĕренекенсем эмел курăкĕсем пухас ĕçе тăрăшса туса пычĕç. Ку таринччен вĕсем канмалли кунсенче вăрмана кайса 230 килограмм шăлан çырли, 45 килограмм армути тата 300 килограмм пилеш пуçтарса пачĕç.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ г. Франклин Рузвельт ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕн Председательне М. И. Калинина янă телеграмма

Совет государствине туни 25 çул тултарнă май эпĕ Сирĕн превосходительствăна Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительствипе халăхĕ ячĕпе саламлатăп. Пĕр ăрăвăн пурнăçĕ тăршшĕнче иккĕмĕш хут ĕнтĕ пирĕн икĕ çĕршыв пĕрлехи тăшмана хирĕç пĕтĕçнĕ халăхсем хушшинче пĕрремĕш ретре пĕрле тăраççĕ. Вăрçăн пирĕн умра тăракан пысăк задачине пурнăçланă çĕрте пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени тата пысăкрах задачăна—пĕтĕм тĕнчере мир тăвас задачăна пурнăçлас ĕçре пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме тытăнмалли тапхăр пулса тămалла. Ирĕклĕ халăхсем хирĕç тăни пĕрлешнĕ нацисен хăватне ÿстерме май пачĕ. Вырăс çарĕпе вырăс халăхĕ нацистла захватчиксене хирĕç кĕрешсе, нацистсем хăйсен вăйĕсене пĕр çĕре пухса хĕснин тĕп йывăрлăхне тÿссе ирттереççĕ, вырăс çарĕпе вырăс халăхĕн нимĕнпе танлашми паттăрлăхĕ, çапăçас хастарлăхĕ тата хăвачĕ чакманнине кăтартса тăраççĕ. Эпĕ Сире превосходительствăна çакна ĕненме ыйтатăп: Пĕрлешÿллĕ Штатсен тăтăшах ÿссе пыракан хăвачĕ эпир татăклăн çĕнтерес ĕçе каять, малашне те сан ĕçе кайса пырĕ.

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинина Турци республикин президенчĕ г. Исмет Иненю янă телеграмма

Сире господин Председатель, хам енчен пĕтĕм чун-чĕререн ырă суннипе пĕрлех туслă Совет Союзĕнчи халăхсене ырă-сывлăхпа телей сунма Октябрьти революци уявĕ çитнĕ майпа кăмăллăн усă куратăп.

ИСМЕТ ИНЕНЮ.

Китай республикин президенчĕ г. Лин Сен М. И. Калинина янă телеграмма

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Китай республикин президентĕнчен г. Лин Сенран çакăн пек телеграмма илнĕ:

«Октябрьти революци 25 çул тултарнă май эпĕ Сирĕн превосходительствăна тата Сирĕн урлă СССР халăхне питĕ хытă савăнса çав тери ăшă салам ярататăп. Китай хăйĕн хастарлă совет союзникне саламлать, унăн захватчиксене хирĕç тăрас ĕçре кăтартнă паттăрлăхĕпе хастарлăхĕ ăна историре ĕмĕрлĕхе чапа кăларчĕç. Эпĕ çакна ĕненсе тăратăп: чĕрĕк ĕмĕр каялла çĕнĕ самана пуçласа янă революцие çуратнă шухăш-кăмăл эпир пĕрле çĕнтерессине вĕçлеме питĕ хытă пулăшĕ тата тĕнчери яланхи мирĕн никĕсне хывĕ.

ЛИН СЕН.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне И. В. Сталина Турци республикин Министрсен Совечĕн Председателĕ г. Сараджоглу янă телеграмма

Октябрьти революци уявĕ çитнĕ майпа Сире, господин Председатель, Турци правительстви пĕтĕм чун-чĕререн яракан салама калама, çавăн пекех тата хамран салам калама мана питех те кăмăллă пулчĕ. Туслă союза чи пысăк телей суннипе йышăнма ыйтатăп Сиртен.

ШЮКРЮ САРАДЖОГЛУ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Иосиф Виссарионович Сталина

Пирĕн духовенство ячĕпе тата мĕнпур православиллĕ вырăс чиркĕвне ĕненекенсен, пирĕн Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсен, ячĕпе Сире, пирĕн çар тата культура вăйĕсен турă суйласа илнĕ çулпуçĕ вырăнне хурса, пире варвăрла тапăнса кĕнĕ вăйсене çĕнтересси патне, пирĕн çĕршыва мирлĕн чечекленесси патне тата унăн халăхĕсен çутă малашлăхĕ патне ертсе каякансене, Совет республики 25 çул тултарнă кун пĕтĕм чун-чĕререн кĕл туса саламлатăп. Тăван çĕршывшăн Эсир тăвакан паттăр та аслă ĕçе Турă ăнăçлăхпа мухтав сунса пиллетĕр.

Московски тата Коломенски патриархăн местоблюстителĕ митрополит СЕРГИЙ.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Иосиф Виссарионович Сталина

Украинăри турра ĕненекен халăх, нимĕç вăрă-хурахĕсен ури айĕнче йывăр хĕн-хур тÿссе асапланаканскер, хăйне ирĕке кăларассине тата тăшман аркатса тăкнă мирлĕ те телейлĕ пурнăç патне каялла тавăрăнассине, Мăн кун кунне кĕтнĕ пекех, кĕтет. Хамăрăн Украинăн ывăл-хĕрĕсен çав туйăмĕсене лайăх пĕлсе тăрса, эпĕ Сиртен Совет государстви 25 çул тултарнă кун манран тата Украинăри турра ĕненекен çынсенчен Сире нумай çул хушши пурăнма çÿлти аттемĕр ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн кĕл туса ырă суннине эсир ертсе пынипе пирĕн хаклă Тăван çĕршыва нимĕç ирсĕрĕсенчен хăвăртрах тасалса çитме ырă суннине йышăнма ыйтатăп. Пирĕн таса çĕр хăй çинчен тăшмана сирсе пăрахса, татах Турă амăшĕн телейлĕ утравĕ пек чечекленме тытăнассине эпир мĕнпур çĕршывпа пĕрле шанса тăратпăр.

Киевски тата Галицки митрополит НИКОЛАЙ.

Америка войскисем Францин Çурçĕр Африкине пырса анни çинчен

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка войскисем Францин Çурçĕр Африкине пырса аннă май Рузвельт Франци халăхне тата Африкăра пурăнакан французсене чĕнсе каланă. Çав чĕнсе каланине француз чĕлхипе радио тăрăх сарнă. Чĕнсе каланин текстне пичетленĕ листовкăсене Англи самолечĕсем Францин тĕп центрĕсем çине тата Францин Çурçĕр Африкинчи тĕп центрĕсем çине пăрахнă.

Рузвельт чĕнĕвĕнче çапла каланă: Германипе Итали Франци хăратса тăрасси пĕтсессĕнех союзниксен войскисем халь йышăннă территорисенчен тухса каяççĕ, тенĕ. Рузвельт французсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене ăçта май килнĕ çавăнта пулăшма сĕннĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: США çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, экспедициллĕ войскăсем Орана тата Алжира пырса аннă. Алжиртан 20 мильăра ларакан форт Сиди-Феррух Пĕрлешÿллĕ Штатсен войскисене паранна. Америкăнецсем тата Алжир сывăхĕнчи оборонăллă тепĕр позицие йышăнса илнĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Вишире официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Алжир хулинче вăрçă ĕçĕсене чарса лартнă, Франци войскисене казармăсенче урăх çĕре тухса çÿреме памасăр усраççĕ.

Касабланка сывăхĕнче Африкăн çурçĕр-хĕвеланăç сыранĕ патĕнче тинĕсри çапăçу пырать.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радиостанци паян кăнтăрла çапла пĕлтернĕ: Касабланка патĕнче тинĕс çинче хаяррăн çапăçнă чухне Виши тинĕс-çар вăйĕсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Касабланка порчĕ çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Орана çавăрса илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Америка бомбардировщикĕсем Касабланкăна виçĕ хутчен пыра-пыра тапăнса доксене вут тивертнĕ. Касабланкăран инçех мар тинĕс çинчи вăйлă çапăçу пуçланса кайнă.

Виширен çапла пĕлтереççĕ: Америка войскисем Касабланкăран кăнтăртарахри Сафи хулине йышăнса илнĕ тата Рабат хулинчен çурçĕререхри Медиа хулинче çирĕпленсе ларнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзлă вăйсен Çурçĕр Африкăри штабĕн паян пичетлесе кăларнă коммюникинче çапла пĕлтернĕ: Франци аллинчи Çурçĕр Африкăн Атлантика океанĕнчи тата Вăтаçĕр тинĕсри сыранĕсем çине Америка войскисем анасси план тăрăх пулса пырать. Питех те кирлĕ темиçе аэродрома йышăнса илнĕ. Виши войскисем вăйсăррăн хирĕç тăраççĕ. Ирхине анса юлнă чаçсем хăвăрттăн малалла куçаççĕ.

Союзниксен тинĕс-çар вăйĕсем кунти положение хăйсем контрольлесе тăраççĕ, вĕсем кунта, пысăк мар икĕ карапсăр пуçне нимĕнле çухатусем те тÿсмен. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче союзниксен пĕр транспортне противник торпеда ярса стройран кăларнă пулнă. Çав транспорт çинче пулнă войскăсем сырана аннă.

Англи войскисем Алжира пырса анни

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи войскисем судносем çинчен Алжира анма пуçланă. Вишин пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем союзниксен войскăсем турттарса пынă транспорчĕсене тăтăшах атакăлаççĕ. Америкăн çар карапĕсем çинчи зенитнăй артиллери пĕр чарăнмасăр персе тăрать.

Нью-Йоркра „Сталинград кунĕ“ тунă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла Гардиа ноябрĕн 8-мĕшне «Сталинград кунĕ» тесе пĕлтернĕ. «Сталинград кунĕн» тĕллевĕ,—тенĕ Ла Гардиа,—пирĕн союзнике тивĕçлипе чысласси тата татăклă çĕнтерÿшĕн пыракан кĕрешÿре эпир унпа пĕрле пулнине кăтартса парасси пулса тăрать», тенĕ.

Марокăри тата Тунисри восстани

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радио пĕлтернĕ тăрăх, Мароккăпа Тунисра Виши влаçĕсене хирĕç восстани пуçланнă. Пĕтĕм Мароккăра осаднăй положени туса хунă.

Виширен килекен хыпарсем пĕлтернĕ тăрăх, петэнла влаçсем вырăнти халăхăн восстанине хаяр мерăсемпе пусарма хăтланаççĕ.

Англин Египетри наступленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: тăшманăн Мерса-Матруха хÿтĕленĕ чаçĕсем паранна. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче итальянецсен «Павиа» ятлă дивизийĕн командирĕ те пур.

Ноябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă транспорчĕсене çаплах вăйлăн атакăланă. Тăшманăн авиацийĕ пысăк активлăх кăтартман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх нимĕçсен бронетанковăй вăйĕсен тĕп бази пулса тăракан Мерса-Матруха илнĕ хыççăн англичансем Ливи чикки патне пырса çитнĕ. Нимĕçсен хыçалтан пыракан чаçĕсене Хальфайяран хĕвелтухăçнерехре çавăрса илнĕ. Противника тата Мерса-Матрухран хĕвеланăçнерехре те поражени тÿстернĕ. Авиаци каялла чакса пыракан чаçсем çине çаплах бомбăсем пăрахать. Официальнăй мар йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем наступлени тума пуçланăранпа пĕтĕмпе 30—40 пин çынна тыткăна илнĕ. Итальянецсемпе нимĕçсен войскисен темиçе çĕр танк тата пин орудине ятăн пĕтнĕ. Çавăрса илессинчен е аркатса тăкассинчен уйрăм чаçсем анчах хăтăлса юлма пултарнă.

КАИР, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсен пушхирте çавăрса илнĕ 6 дивизине пĕтĕмпех тата хăйсен пĕтĕм пурлăхĕпех тыткăна илнĕ. 900 оруди тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Де Голль радио тăрăх каланă сăмах

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, Франци халăхне чĕнсе, радио тăрăх де Голль генерал сăмах тухса каланă. «Аслă самант çитрĕ,—тенĕ вăл.—Çурçĕр Африкăна çавтери пысăк вăйсем анма тытăнчĕç. Сăмах пирĕн Алжир, пирĕн Тунис, пирĕн Марокко Франци ирĕке кăларас ĕçе пуçармалли никĕс пулса тăрасси çинчен пырать». Де Голль Франци çарне, авиаципе флотне союзниксемпе пĕрлешме чĕннĕ.

Вишипе США правительствисем хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусене татнă

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян каçхине Лаваль США ĕçĕсен поверенăйне Туку господина Виши правительстви Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахасси çинчен формальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран панă радиограмма-молние сарать. Çав радиограммăра Франци посолне унăн паспортне каялла тавăрса пани çинчен каланă. Пĕрлешÿллĕ Штатсем Виши правительствин Америкăри портсенче тăракан пур суднисене те конфискациленĕ.

—o—

Америка бомбардировщикĕсем Лиле, Абвиле тата Бреста тапăннă

ЛОНДОН, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 9-мĕшĕнче Америкăн «Вĕçекен крепость» «Б—17» йышши бомбардировщикĕсем союзлă çĕршывсен истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе Лильри металлурги заводне тата паровозсем тăвакан завода тапăннă, унсăр пуçне тата противникăн Абвильри аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем темиçе объекта тÿрĕ лекнине палăртнă.

Брестри (Францин оккупациленĕ зони) подводнăй лодкăсем тăмалли вырăнсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Çав операцисенчен 8 самолет хăйсен базисене тавăрăнман.

Хальхи вăхăтра тумалли калаçусен, лекцисен тата докладсен темисем

1. Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра иртнĕ çулталăкра тунă вăрçă ĕçĕсем.
2. Пирĕн тылра иртнĕ çулталăк хушшинче тунă организаторла ĕçсем.
3. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем.
4. Пĕтĕм халăхăн партизанла движенийĕ—тăшмана аркатса тăкмалли татăклă условисенчен пĕри.
5. Мускава, Тулăна, Одессăна, Севастополе, Ленинграда, Сталинграда паттăррăн хÿтĕлени—вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк харсăрлăхăн, хурçă пек çирĕп дисциплинăн, çирĕплĕхĕн тата çĕнтерме пĕлнин тĕслĕхĕ.
6. Совет Союзĕн, Англин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен гитлерла Германипе унăн Европăри союзникĕсене хирĕç тунă боевой союзĕ.
7. Европăри гитлерла «çĕнĕ йĕрке»—халăхсемшĕн тĕрме пулса тăрать.
8. Европăри иккĕмĕш фронт çинчен.

ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ.

Сталин юлташăн доклачĕ пирки ютçĕршывсенчи пичет мĕн çырать

АНГЛИЯ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн парти тата общество организацийĕсемпе пĕрле пулнă чаплă ларăвĕнче тунă доклад пирки Англири пичет питĕ интересленсе çырать.

«Дейли экспресс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырнă: «Сталинăн хĕрÿллĕ те хăватлă сăмахне эпир тивĕçлипе хаклама пултаратпăр. Çав сăмахра вăл хăйĕн тăван çĕршывĕнчи çынсем çавтери нумай вăй хурса кĕрешнине тĕрĕс мухтать. Германия, вырăссен чул тăвĕ çине пырса тăрăнса, малтанхи хут хăйне тивĕçлине туянчĕ. Гитлер вырăссен çирĕплĕхĕ çине пырса тăрăничен тунă пысăк çĕнтерÿсем пек çăмăл çитĕнÿсем тата противниксене çăмăллăн парăнтарасси нимĕçсемшĕн пĕтсе ларчĕ».

«Йоркшир пост» хаçат хăйĕн умсатьинче çакна палăртать: «Сталинăн усăмлă сăмахĕ союзлă çĕршывсен руководителĕсем хушшинчи пăтрашу пирки иккĕленнине сирсе ярать. Вырăссен геройла çарне хытă хĕссе пынине вăйсăрлатас ĕçре тата Гитлерăн вăрçă машинине çапса аркатас ĕçре Европăри иккĕмĕш фронт пысăк вырăн йышăнса тăнине питех те тĕрĕс палăртса, Сталин Англипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем тĕлĕшпе вăл хăй Черчилльпе пĕр-пĕрине пĕтĕмĕшпех ăнланса илнине питех те вăйлăн çирĕплетсе каларĕ Сталин шухăшĕпе, Европăра, тĕнчери пĕрремĕш вăрçăри пек, иккĕмĕш фронт пулнă пулсан, Россия халĕ çынсемпе территори тĕлĕшĕнчен тÿссе ирттернĕ йывăр çухатусенчен хăтăлса юлма пулнă пулĕччĕ».

Сталин юлташăн доклачĕ çавăн пекех тата Лондонри радиокомментаторсен выступленийĕсенче те паллă вырăн йышăнса тăрать

США.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Сталин юлташ Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă доклада Америкăри пур хаçатсем те пĕрремĕш страницăсенче пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă. Докладдăн иккĕмĕш фронт çинчен калакан пайне уйрăмах палăртса пичетленĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат доклада— «Сталин иккĕмĕш фронт пулать тесе каланă» текен заголовокпа пичетлесе кăларнă. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çакăн пек заголовок панă: «Сталин—союзниксем иккĕмĕш фронта уçасçĕ тесе пĕлтернĕ». «Нью-Йорк таймс» хаçат доклада пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă.

Доклад пирки çырса, «Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем—Сталин юлташ иккĕмĕш фронт пулатех, мĕншĕн тесен, вăл Российăшăн кăна мар, Англипе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемшĕн те кирлĕ тесе каланипе хăйсем килĕшни çинчен пĕлтереççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» çапла çырать: противникăн Африкăри вăйĕсене туртса илни Европăра вăйлă наступлени пуçарса ярса совет фронтĕнчен 60 дивизие туртса илессине питех те çителĕксĕр улăштарнă пек туйăнать пулин те, Африкăри операцисем тĕп задачăна пурнăçа кĕртес ĕçĕн пуçламĕшĕ пулса тăраççĕ.

ТУРЦИЯ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Турцири хаçатсем пурте Сталин юлташăн доклачĕ çинчен çырнине пĕрремĕш страницăсенче пичетлесе кăларнă. Чылай хаçатсем çавăн пекех тата Сталин юлташăн портретне те кăларнă.

«Тан» хаçат доклада çакăн пек заголовокпа пичетлесе кăларнă: «Сталин — иккĕмĕш фронт паян е ыран пулать тесе каланă. Совет премьерĕ калани тăрăх пăхсан, çав фронт маларах уçăлнă пулсан, Германи çарĕсем кăçалхи çуллах поражени умĕнче тăнă пулĕччĕç».

«Икдам» хаçатăн заголовокĕнче çапла каланă: «Сталинăн заявленийĕ. Иккĕмĕш фронт уçăлнă пулсан, гитлеризма çапса аркатасси пуçланнă пулĕччĕ. Сталин—иккĕмĕш фронт пĕр иккĕленмесĕрех пулать тенĕ тата вăл икĕ енĕн те вăрçă тĕлĕшĕнчи тĕллевĕсене тĕплĕн çутатса панă».

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 932 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.